7585 №360
46-95

Пролетарии всех стран, соединяйтесь!

10 февраля 1946 года—день выборов в Верховный Совет СССР

*НАШИ КАНДИДАТЫ*

# АЛЕКСАНДР ФЕДОРОВИЧ ГОРКИН

Кандидат в депутаты Совета Национальностей Верховного Совета СССР по Канашскому избирательному округу № 559

ЧУВАШОБКОМ ВКП(б) 1946

## 10 февраля 1946 года—день выборов в Верховный Совет СССР

**Выберем в Верховный Совет СССР лучших патриотов нашей Родины, неутомимых борцов за счастье и славу Советского народа!**

## ГОРКИН АЛЕКСАНДР ФЕДОРОВИЧ

**Секретарь Президиума Верховного Совета Союза ССР—кандидат в депутаты Совета Национальностей Верховного Совета СССР по Канашскому избирательному округу № 559.**

Общие собрания рабочих, инженерно-технических работников, служащих Канашского вагоноремонтного завода и депо Канаш Казанской железной дороги, членов сельхозартелей: имени Доронина Канашского района, «Красная Чувашия» Янтиковского района, имени Кирова Шихазанского района единодушно выставили кандидатом в депутаты Совета Национальностей Верховного Совета СССР по Канашскому избирательному округу № 559 секретаря Президиума Верховного Совета СССР товарища Горкина Александра Федоровича.

Тов. Горкин А. Ф. родился в 1897 году в селе Рамешки, Селищенской волости, Бежецкого уезда, Тверской губернии. С ранних лет он включается в революционную работу. В начале 1916 года тов. Горкин вступил в ряды большевистской партии и стал работать в подполье пропагандистом Тверской организации большевиков. С августа 1917 года по июнь 1919 года тов. Горкин работает в Твери в советских органах—сначала секретарем Тверского городского Совета, а затем председателем Тверского губисполкома.

В 1919 году тов. Горкин был командирован в г. Курск. Здесь он работает в качестве члена коллегии Курской ЧК. Летом 1920 года партия мобилизует тов. Горкина на фронт. Он отправляется на Кавказский фронт в качестве заместителя начальника политотдела 2-й московской бригады курсантов.

С 1921 года тов. Горкин—на партийной работе. Сначала он работает ответственным секретарем Тверско-

го губкома партии, а с 1922 по 1924 год—в Киргизском Обкоме ВКП(б) в качестве заведующего отделами агитационно-пропагандистским, а затем и организационным. С 1924 по 1926 год тов. Горкин находится в Москве на руководящей работе в сельскохозяйственной кооперации. В 1926 году тов. Горкин был выдвинут на работу в аппарат Центрального Комитета ВКП(б). С 1926 по 1929 год он работает ответственным инструктором ЦК ВКП(б).

В 1929 году ЦК ВКП(б) командировал тов. Горкина на работу в Средне-Волжский крайком ВКП(б). Здесь он заведует отделом по работе в деревне и агитационно-массовым отделом крайкома ВКП(б).

В октябре 1931 года ЦК ВКП(б) командировал тов. Горкина на учебу в Аграрный институт Красной профессуры. В годы учебы в институте он избирается членом Фрунзенского райкома ВКП(б) гор. Москвы и членом Московской областной контрольной комиссии.

С мая 1932 года тов. Горкин снова работает в аппарате ЦК ВКП(б)—в качестве заместителя заведующего организационно-инструкторским отделом и заведующего сектором сельскохозяйственного отдела ЦК ВКП(б). В конце 1933 года ЦК ВКП(б) направил его на укрепление Средне-Волжской краевой парторганизации. Он избирается вторым секретарем Средне-Волжского крайкома ВКП(б).

После разделения Средне-Волжского края тов. Горкин в 1934 году избирается первым секретарем Оренбургского (ныне Чкаловского) Обкома ВКП(б).

Постановлением 4-й сессии Центрального Исполнительного Комитета СССР VII созыва от 9 июля 1937 года Александр Федорович Горкин был избран членом Президиума ЦИК СССР и секретарем Центрального Исполнительного Комитета Союза ССР.

Тов. Горкин А. Ф. является одним из лучших сынов нашей партии, испытанным и непоколебимым борцом за дело Ленина-Сталина. В течение 30 лет он состоит в рядах партии большевиков и высоко держит великое звание члена большевистской партии. На XVIII съезде ВКП(б) тов. Горкин избран кандидатом в члены ЦК ВКП(б).

Трудящиеся нашей страны знают тов. Горкина как виднейшего государственного деятеля ленинско-сталинского типа. Всю свою силу и энергию он отдает служению своему народу. В 1937 году, в период прошлых выборов, он был избран депутатом в Совет Национальностей Верховного Совета СССР по Канашскому избирательному округу. На протяжении этих лет тов. Горкин с честью выполнял обязанности избранника народа и полностью оправдал доверие своих избирателей.

Товарищи избиратели! Александр Федорович Горкин является нашим достойным кандидатом в депутаты Верховного Совета Союза ССР. 10 февраля 1946 года—в день выборов в Верховный Совет СССР все отдадим свои голоса за тов. Горкина—испытанного ленинца-сталинца, виднейшего деятеля нашего государства!

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1946 ҫулхи февралӗн 10-мӗшӗ—
СССР Верховный Советне суйламалли кун

*ПИРӖН КАНДИДАТСЕМ*

# АЛЕКСАНДР ФЕДОРОВИЧ
# ГОРКИН

Канашри 559-мӗш №-лӗ суйлав округӗ
тӑрӑх СССР Верховный Совечӗн
Национальноҫсен Советне депутата суйлама
тӑратнӑ кандидат

ВКП(б) ЧӐВАШ ОБКОМӖ—1946

## 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ— СССР Верховный Советне суйламалли кун

## СССР Верховный Советне хамăр Тăван çĕршывăн чи лайăх патриочĕсене, Совет халăхĕн телейĕпе чапĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекенсене суйлар!

## АЛЕКСАНДР ФЕДОРОВИЧ ГОРКИН

**ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ—559-мĕш Канаш суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат.**

Канашри вагонсем юсакан заводри тата Хусан чугун çулĕ çинчи Канаш деповĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен, служащисен пухăвĕсем, Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан, Тăвай районĕнчи „Красная Чувашия“, Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан ялхуçалăх эртелĕн членĕсен пухăвĕсем 559-мĕш Канаш суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама, пĕр кăмăллă пулса, СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарьне Александр Федорович Горкин юлташа кандидата тăратрĕç.

А. Ф. Горкин юлташ 1897 çулта Тверь кĕпĕрнинчи, Бежецк уездĕнчи, Селищенски вулăсри Рамешки ялĕнче çуралнă. Çамрăк чухнех вăл революциллĕ ĕçе хутшăнать. 1916 çул пуçламăшĕнче Горкин юлташ большевиксен партин ретне кĕрет, большевиксен Тверьти организацин пропагандисчĕ пулса вăрттăн ĕçлеме тытăнать. 1917 çулхи августран пуçласа 1919 çулхи июнь уйăхĕччен Горкин юлташ Тверь хулинче совет органĕсенче—малтан Тверь хула Совечĕн секретарĕ пулса, унтан Тверь кĕпĕрнин Исполком председателĕ пулса ĕçлет.

1919 çулта Горкин юлташа Курск хулине янă. Кунта вăл Курскри Чрезвычайный Комисси коллегийĕн членĕ пулса ĕçлет. 1920 çулхи çулла парти Горкин юлташа фронта мобилизацилет. Вăл Кавказ фронтĕнче Мускаври курсантсен 2-мĕш бригадин политотдел начальникĕн заместителĕ пулса ĕçлет.

1921 çултанпа Горкин юлташ—парти ĕçĕнче. Малтан

вăл партин Тверь губкомĕн ответлă секретарĕ пулса ĕçлет, 1922 çултан пуçласа 1924 çула çитиччен—ВКП(б) Киргиз Обкомĕнче агитаципе пропаганда пайĕн, унтан организаци пайĕн заведующийĕ пулнă. 1924 çултан пуçласа 1926 çула çитиччен Горкин юлташ Мускавра ялхуçалăх кооперацинче ертсе пырас ĕçре ĕçлет. 1926 çулта Горкин юлташа ВКП(б) Центральный Комитечĕн аппаратне ĕçлеме илнĕ. 1926 çултан пуçласа 1929 çула çитиччен вăл ВКП(б) Центральный Комитечĕн ответлă инструкторĕ пулса ĕçлет.

1929 çулта ЦК ВКП(б) Горкин юлташа ВКП(б) Вăтам-Атăл крайкомне ĕçлеме ярать. Кунта вăл ВКП(б) Крайкомĕн ялти ĕçе ертсе пыракан пайĕн, унтан ВКП(б) Крайкомĕн агитаципе массăллă ĕç пайĕн заведующийĕ пулать.

1931 çулхи октябрьте ЦК ВКП(б) Горкин юлташа Хĕрлĕ профессурăн Аграрнăй институтне вĕренме ярать. Институтра вĕреннĕ çулсенче ăна ВКП(б) Мускав хулинчи Фрунзе райкомĕн членне тата Мускав облаçĕнчи контроль комиссин членне суйлаççĕ.

1932 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа Горкин юлташ каллех ЦК ВКП(б) аппаратĕнче—организаципе инструкторсен пайĕн заведующийĕн заместителĕ тата ЦК ВКП(б) ялхуçалăх пайĕнче сектор заведующийĕ пулса ĕçлет. 1933 çул вĕçĕнче ЦК ВКП(б) ăна Вăтам Атăл крайĕнчи парторганизацине çирĕплетме ярать. Ăна ВКП(б) Вăтам Атăл крайкомĕн иккĕмĕш секретарьне суйлаççĕ.

Вăтам Атăл крайне пайланă хыççăн, 1934 çулта Горкин юлташа ВКП(б) Оренбург (хальхи Чкалов) обкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйлаççĕ.

СССР Центральный Исполнительный Комитечĕн VII созыври 4-мĕш сессийĕ 1937 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленипе Александр Федорович Горкина СССР ЦИК Президиумĕн членне тата ССР Союзĕн Центральный Исполнительный Комитечĕн секретарьне суйланă.

А. Ф. Горкин юлташ пирĕн партин чи паллă ывăлĕсенчен пĕри, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешес ĕçре тĕрĕсленнĕ, пур енчен те çирĕп ывăлĕсенчен пĕри пулса тăрать. 30 çул хушши вăл большевиксен партин ретĕнче тăрать, большевиксен парти членĕн чаплă ятне çӳлте çĕклесе пырать. ВКП(б) XVIII съездĕнче Горкин юлташа ЦК ВКП(б) членĕн кандидатне суйланă.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Горкин юлташ государствăн ленинла-сталинла сăнарлă деятелĕ пулса тăнине пĕлеççĕ. Хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе хастарлăхне вăл халăхшăн ĕçленĕ çĕре парать. 1937 çулта, иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнче, ăна Канаш суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйланă. Çак иртнĕ çулсем хушшинче Горкин юлташ халăх суйланă депутатăн ĕçĕсене чыслăн туса пырса, хăйне суйлакансем шаннине тÿрре кăларчĕ.

Суйлавçă юлташсем! Александр Федорович Горкин пирĕн СССР Верховный Советне депутата суйламалли тивĕçлĕ кандидат пулса тăрать. 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче—СССР Верховный Советне суйламалли кун—хамăр сасăсене Горкин юлташшăн, ĕçре тĕрĕсленнĕ ленинец-сталинецшăн, пирĕн государствăн паллă деятелĕшĕн парар!

ЧУВАШГИЗ. НТ 00032. Чебоксары, тип. № 1. Заказ № 07. Тираж 4000